# ЯН СУДРАБКАЛН

*Латви*

## ĂС ПАНИ

Яланхилле ăс мар ку, çук, ку урăх:
Ват старикрен çамрăкланма вĕрен,
Çĕнел ун çĕр çулхи вучĕпелен...

Хăш чух пусса килет пит пысăк хурлăх,
Çамрăксенчен эс кĕвĕçе пуçлатăн,
Ватту çитсе çывхарнине туятăн.
Ун пек чухне вула эс Джамбула!
Кăшт çеç вăл çитеймерĕ çĕр çула,
Кашни çулне вăл пурăнчĕ туллин.
Тав куркине тĕппи, пĕр тумламне
Тăкмасăр, ĕçсе янă пек çав çын
Ирттерчĕ хăйĕн вăрăм ĕмĕрне,
Хĕвел ăшшиччĕ ун сăмахĕнче...

Эс те куллен хӗвел тухнишӗн савӑн,
Пурнатӑн эс телей ҫӗршывӗнче,
Ӗҫӳ хисеплӗ те мухтавлӑ санӑн,
Самантсерен — ыр ят; кун ҫук усалӑн, —
Ӑна ҫӗнтерчӗҫ ирӗк чӗресем,
Ватту ҫитсен те яш пулма пӗлсем!

1947